# Чăваш çырулăхне çĕнетнĕ тапхăрта

И. Я. Яковлев хăйĕн юлташĕпе, В. А. Белилин студентпа пĕрле, чăваш алфавитне тунăранпа, çапла майпа чăвашăн çĕнĕ çырулăхĕ пуçланса кайнăранпа 100 çул çитет. Вырăс графикипе усă курса тунă çырулăх чăваш чĕлхин шалти законĕсемпе питех те килĕшсе тăнă, ăна халăх та ырласа йышăннă. Ахальтен мар ĕнтĕ питĕ хăвăрт сарăлнă вăл. Халăх юрри-сăввисенчи лексика пуянлăхĕн, грамматика стройĕпе стилистика сăнарлăхĕн никĕсĕ çинче йĕркеленме тытăнать чăваш литература чĕлхи. Ку тĕлĕшпе революцичченхи чăваш писателĕсем те пысăк ĕç тунă, вĕсем литература чĕлхине вăй çитнĕ таран аталантарса пынă.

Революци çĕнтерни хыççăн çĕршывра государство стройĕ улшăнни, пролетари диктатури туса хуни, класс кĕрешĕвĕ чи çӳлти пусăма çĕкленни, социализм тăвас ĕç утăм хыççăн утăм малалла кайса пыни чăваш чĕлхине тӳррĕнех пырса тивнĕ, ун лексикине политика, наука тата техника ăнланăвĕсене пĕлтерекен сăмахсем пиншерĕн кĕнĕ. Чăваш пичечĕ хăватлă аталаннăран, халăх пĕлӳлĕхĕ пĕр вĕçĕм ӳснĕрен, литературăра массăллă юхăм çуралнăран чăваш чĕлхи те хăйĕн малтанхи картинчех юлма пултарайман. Литературăра çĕнĕ нормăсем тăвасси, литература чĕлхине малалла аталантарасси, орфографипе терминологие йĕркелесси кун йĕркине тухса тăнă.

Революцичченхи литература чĕлхинче анатри чăвашсен диалектĕнчи лексикăпа фонетика элеменчĕсем пуç пулса тăнă. Совет саманинче, уйрăмах Чăваш автономиллĕ облаçне тусан, литература чĕлхи малтанхи пекех пĕр енлĕ, анатри диалект пуянлăхĕпе çеç аталанма пултарайман, мĕншĕн тесен Хусанта тухакан «Канаш», «Чухăнсен сасси», «Хĕрлĕ салтак», «Ана», «Шурăмпуç» хаçатсемпе журналсенче тури чăвашсен диалекчĕпе те енлăн çыра пуçланă. Çавна май чăваш литература чĕлхине çĕнетес, ăна тунă чухне турипе анатри диалектсене пĕр тан правăпа усă курас задача тухса тăнă. Çĕнĕ саманара çакă та уççăн палăрнă: наци чĕлхи текех хăй тĕллĕн, хăйĕн словарĕн пуянлăхĕпе çеç усă курса, чĕррĕн те хăватлăн малалла каяймасть. Кивĕ сăмах тĕпĕсенчен пур чухне те çĕнĕ ăнлавсем тума çук. Çавна май лексикăна вырăс чĕлхинчен политика, наука тата техника ăнланăвĕсене — паллах, чăваш чĕлхин нормисене пăсмасăр! — йышăнмалла.

Чăваш литература чĕлхине çĕнĕлле йĕркелеме çăмăл пулман. Ку ыйту çине чĕлхеçĕсем те пĕр пек пăхман. Çавна май ку ыйту тавра Совет влаçĕн пирвайхи çулĕсенчех кĕрешӳ çивĕчленнĕ, тĕрлĕ юхăмсем çуралнă. Тăвлашу класс интересĕсенчен тапранса кайнă. Чĕлхе ыйтăвĕ — чăвашсен буржуаллă национализмĕ пуринчен ытларах палăрнă кĕтес. Националистсем, чĕлхе ыйтăвне тĕп вырăна хурса, чăвашсене вырăс халăхĕнчен уйăрасшăн пулнă. Çакă вăл вĕсем литература чĕлхине тури диалектран тата вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенчен тасатасшăн кĕрешнинчех питĕ лайăх курăнать. Интернационаллă сăмахсем вырăнне вĕсем е çĕнĕрен шухăшласа тупнă, е манăçа юлнă кивĕ ăнлавсене чĕлхене кĕртме хăтланнă. Вĕсем тимлемесĕр мар ĕнтĕ Совет влаçĕ çĕнтерни чылай хушă иртсен те «совет», «совет влаçĕ», «совет правительстви» вырăнне искусствăллă майпа тунă ăнлавсемпе е чăвашсен ĕлĕкхи терминĕсемпе — «канаш», «канаш ирĕкĕ», «тӳре-шара» — усă курнă. «Пролетариат» вырăнне «чухăн халăх», «чухăнсем», «ĕççынни» вырăнне «хура халăх» тенĕ.

Çак тенденци аталанса пынă май 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче «таса чăваш чĕлхи» теори çуралнă. Чи малтан ку ыйтăва Чĕмпĕрте 1920 çулта тухчă «Атăл юрри» журнал çĕклет. «Çĕнĕ сăмахсем» ятлă статья авторĕ ку тĕлĕшпе акă мĕн çырать: «Маншăн пулсан, ют чĕлхе сăмахне иличчен çĕнĕ сăмах туни нумай аван, мĕншĕн тесен урăх халăх сăмахне кĕртнипе эпир чăваш чĕлхине пăсатпăр тата ăнланма та йывăр тăватпăр. 10—15 çултан çĕнĕ сăмахсем чĕлхере чиперех çирĕпленсе çитĕç,— тесе лăплантарать автор. Мĕнле çĕнĕ сăмахсем сĕнет-ха вăл? Тĕрлĕрен суффикссемпе (-çă, -çĕ, -ан, -ен, -лăх, -лĕх) усă курса, «пичĕкеçĕ» (бондарь), «сехетçĕ» (часовщик), «арманçă» (мельник), «кĕнекеçыран» (писатель), «хутçыран» (писарь), «часçӳрен» (скороход), «çунанту» (вулкан), «хăйçӳрен» (автомобиль), «вăратан» (будильник), «сăвăллăх» (поэзия), «кĕчекелĕх» (книгохранилище), «ту галлăх» (батарея), «кимĕллĕх» (флот) тата ытти çĕнĕ сăмахсем тума хушать статья авторе. «Арманçă», «пичĕкеçĕ», «сехетçĕ» йышши сăмахсем чăваш чĕлхин нормисемпе килĕштерессĕ пулсан та, ытти ăнлавсем валли çĕнĕрен тунă чăвашла сăмахсем юрăхлă мар, вĕсен пĕлтерĕшĕсене çителĕклĕ уçса параймаçĕ е пачах йăнăш кăтартаççĕ.

1922 çул пуçламăшĕнче «таса чĕлхе» теорине Д. П. Петров-Юман чĕрĕ вăй пама хăтланать. Унăн январĕн 27-мĕшĕнче «Канашра» пичетленнĕ «Чăваш çĕрĕçлевĕ» статйи айне редакцирен çапла хушса çырнă: «Юман юлташ хăйĕн статйине вырăс чĕлхинчен пĕр сăмах кĕртмесĕр çырнă. Редакци ăна каçата улăштармасăр кĕртрĕ. Çыру чĕлхине юратакансем Юман статйин чĕлхи пирки «Канаша» çырассине шанатпăр». Ку статьяра чăнах та çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем нумай: «пăлхавăр» (революци), «Чăваш тĕпçĕрĕ» (Чăваш автономиллĕ облаçĕ), «ăслăлăхçă» (ученый), «питĕш» (плотность), «аваллăх» (истори), «ăшăсивĕ» (температура), «ăшăпусми» (градусник) тата ытти те.

Çав çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче Юман «таса чĕлхепе» çырнă «Чăваш уявхӳшĕ» рецензи пичетленĕ. Унта мĕн çырнине тӳрех ăнланмалла та мар. «Уявхӳшĕ» тени театр иккен, «çӳлтитивлет» — талант, «уявкалав» — пьеса, «уяввăййи» — спектакль, «тĕпчĕк» — поэма, «вулăçă» — вулакан (суфлер), «курăçă» — куракан тата ытти те. Рецензире калаçу К. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх Чăваш театрĕнче лартнă спектакль çинчен пырать. Акă мĕнле сăнласа парать Юман хăйĕн чунне килентерекен чăвашсен аваллăхне: «Вăйă çинчен мĕн калас? Кун пек уяввăййине эпĕ халиччен курманччĕ. Тăрă шыв пек таса чăваш чĕлхи, пĕр ют сăмах çук. Куç умĕнче чăваш йăли, чăваш пурнăçĕ... Куç умĕнче сĕр çулхи юман пек тĕреклĕ, сĕм вăрман упи пек паттăр чăваш пуянĕ Михетер, унăн ар сăмахĕнчен виличчен тухман, упăшкине хирĕç çур урапусăмĕ пусман мăшăрĕ, çĕр çине вăхăтлăха аннă Нарспи, ун чĕрине çунтарса кĕл тăвакан, кăвакарчăн пек йăваш, шăпчăк пек канăçсăр, çӳлелле вĕçен

● *Леонид АГАКОВ*



# ШУХĂШЛАСА ТА КĂЛАРАЙМĂН!..

*(Судья пулнă çын каласа панисем)*

Панфил Иванч Себадаевпа (ун хушамачĕ çăпата сăмахран пулнă, тет) эпир пĕр хушă запасри полкра та, унтан вăрçăра та пĕрле, пĕр ротăра пулнăччĕ. Маттур салтакчĕ вăл. Çарти дисциплинăна пит çирĕп тытса пыратчĕ. Уставсене пăсни пĕрре те пулман унăн. Чи кансĕр вăхăтсенче те пур-çук сухалне яп-яка хырма май тупатчĕ, çипуçĕ те тирпейлĕччĕ унăн — çухави айĕнчен яланах шап-шур катан пир хĕрри курăнать, пур тӳмесем те тĕп-тĕрĕс; хăйне шанса панă хĕçпăшал — леш кĕске аварлă кĕреçе таранах — пуринчен те тасарахчĕ. Командирсем хушнине вара ун пек хăвăрт та тĕп-тĕрĕс туса пыраканни çукчĕ, темелле. Запасри полкра пурăннă чух ротăри çивĕч чĕлхеллĕ этемсенчен (хăйхи, «остряк-самоуч-

шрифчĕ пире хĕвеланăçĕнчи культурăна тĕттĕм халăх хушшинче сарма нумай пулăшĕ»,— тесе сӳпĕлтетет.

Гатчелĕн сиенлĕ шухăшĕсем пирки тепĕр темиçе кунтанах «Канашра» Н. И. Ванеркке çырни тухнă. Вăл тӳрех çакна кăтартать: чăваш çырулăхне латин графики çине куçарни хутпĕлменлĕхпе кĕрешес, чăваш культурине çĕклес ĕçе пĕтĕмпех чарса лартĕччĕ. «Вырăс халăхне тăшман вырăнне хурса, унтан уйрăлса каяс шухăш — йăнăш шухăш. Чăваш халăхне чăнах та культурăллă халăх тăвас тесен, пуринчен малтан пирĕн вырăс халăхĕн культурине пĕлсе, вăл пулăшнипе çутта тухма тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен литовецсем, латышсемпе поляксем пек эпир нимĕçсемпе юнашар мар, вырăссемпе юнашар пурăнатпăр»,— тесе çырнă Ванеркке.

Гатчель шухăшĕсем Чăваш çĕршывне тĕпчекен обществăра та сарăлма пăхнă. 1922 çулхи майăн 25-мĕшĕнче пулнă ларура ку ыйтупа Милли тухса каласнă. Унăн докладĕнчи пĕр вырăна кăна илер-ха: «Пĕр аллă çул хушшинче, вырăс шрифчĕпе çырнă пирки, чăвашсем вырăсланса каяççĕ. Тата вырăс культури хĕвеланăçĕнчи халăхсен культуринчен кайра пырать. Эпир, латин шрифтне йышăнсан, хĕвеланăçри культурăна йышăнса, хăвăртрах малалла кайма пултаратпăр. Ку шрифта йышăнсан, чăвашсем вырăссенчен уйрăлса, хăйсен халăхлăхне ăнланса илсе, хăйсен культурине тума пултараççĕ»,— тенĕ Милли. Милли йăнăшĕсене çав ларурах Д. С. Эльмень, А. М. Михайлов, Н. Я. Золотов, М. П. Петров тата ыттисем те кăтартса панă, ун шухăшĕсене национализмлă, реакциллĕ тесе хакланă, чăваш халăхĕ хăйĕн культурине вырăс халăхĕпе пĕрле çеç хăпартма пултарнине палăртнă, çав вырăнсăр ыйтăва путлантарнă.

1922 çулта «Канаш» хаçатра чăваш орфографи нормисем пирки пуçланнă дискусси 1925 çул вĕçлениччченех пынă. Унта вырăнти чĕлхеçĕсемсĕр пуçне Н. И. Ашмарин, чăваш алфавитне тăвакан Василий Алексеевич Белилин, çавăн пекех Мускавра тухакан «Ĕçлекенсен сасси» журнал та хутшăннă. Тĕп вырăнта çырулăхпа калаçу чĕлхи патне çывхартас, алфавита çĕнĕ саспаллисем кĕртес ыйту тăнă. Алфавит реформине ирттерме кирлине Ашмарин та, Белилин та йышăннă. «Ĕçлекенсен сасси» журнал вара пачах хирĕçле çыра пуçланă.

Вăрăма кайнă дискусси 1926 çул пуçламăшĕнче Чăваш ЦИК постановлени йышăннă хыççăн чарăннă. Чăваш алфавитне çĕнĕрен пĕтĕмпе те пĕртен-пĕр «ф» саспалли çеç кĕртнĕ. 1933 çулта тин чĕлхе пирки тепĕр хут дискусси пулса иртнĕ. Ун хыççăн чăваш алфавитне çĕнетнĕ, унта вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенчи сасăсем валли çĕнĕ саспаллисем кĕртнĕ. Алфавит реформи хыççăн чăваш çырулăхĕ халăх чĕлхипе чылай çывăхланнă.

**Арсений ИЗОРКИН.**